**Вĕренӳ çулĕ çывхарать**

# Пĕрремĕш класс ачи «мĕн хак тăрать»?

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ алăкран шаккать. Уйрăмах пĕрремĕш хут парта хушшине ларакансем ăна чăтăмсăррăн кĕтеççĕ. Капăр шкул тумтирĕпе портфельсем тахçанах хатĕр. Вĕсене туянасси пирки ашшĕ-амăшĕсенчен çу пуçлансанах ыйтма пуçланă ĕнтĕ ĕнерхи садик ачисем. Анчах вĕсем пĕртте йӳнĕ марçке.



Ачана пĕрремĕш хут шкула кайма мĕн кăна илсе памалла мар пулĕ!? 2 тенкĕ тăракан кăранташран пуçласа 1 пин е унтан та хаклăрах шкул костюмĕ таранах. «Мĕн хака» ларать-ха ачана пĕрремĕш класа яма? Çак ыйту çине хурав шыраса Муркашри магазинсене тата пасара çул тытрăм.

Шкулта кирлĕ таварсен хакне кĕнеке лавккинчех пĕлме шутларăм. Кунта хаксем ытлах çыртмаççĕ темелле. Шкулта кирлĕ япаласенчен чи йӳнни – кăранташ. Çакăнтан шутлама пуçларăмăр та шкул ачин «хакне». Вăл 2 тенкĕ. (Кăна та, ытти хаксене те чи йӳннисене е пахалăхĕпе лайăххраххисене илсе кăтартатпăр.) Унпа çырнине тасатмалли ластик та 2 тенкĕрен пуçласа малалла. Ручка, тĕслĕ кăранташсем, линейка, тĕслĕ хутсем, картун хутсем, пластилин... Мĕн кăна чикмелле мар пулĕ портфеле. Çаксем кăна 70 тенкĕне майлă пулаççĕ. Сăрăсем, гуашь, кистик, клей, шыв ямалли стакан та, ӳкерчĕксем тумалли альбом та кирлĕ-çке. Каллех шутласа пăхатпăр. 120 тенкĕпе танлашать çак хатĕрсен хакĕ.

Анчах тата нумай кирлĕ-ха ачана. Ятарлă çыру тетрачĕсем те, çӳхе тетрадьсем те, вĕсен хуплашкисем, папки тата. Вырăс чĕлхи урокĕсенче усă курмалли çыру тетрачĕ 65 тенкĕ, чăваш чĕлхипе – 98 тенкĕ. Уйрăм авторсен вара – 150-200 тенкĕпе танлашать. Кун çумне 2 тенкĕ çурă (клеткăлли) е 3 тенкĕ тăракан (йĕрли) çӳхе тетрадьсем пĕр теçетке илсе хуратпăр. Лайăх хуплашкасем вара 4 тенкĕ тăраççĕ (60 пусли виç кунлăха çеç пырать). Çапла вара тетрадь таврашĕпех пурĕ 180 тенкĕрен иртрĕ. Кĕнекесен хуплашкисем те кирлĕ, пенал, ĕç урокĕсенче – хачă, кăранташсем шĕвĕртмелли хатĕре те туянма манмалла мар. Тепĕр 70-80 тенкĕ хатĕр те.

Портфеле вара кунта 203 тенкĕрен (тăпăлтăпăл, пĕчĕк, шăпах 1-мĕш класс ачине валли) пуçласа 495 тенкĕ таран тӳлесе илме пулать.

Пасара кайиччен вара кунта пухăннă суммăна шутлар. Çӳлерех асăннă таварсене туянса çеç 950-1000 тенкĕ кăларса хума тивет. Ачана килте усраймăн-çке.

Пасарта вара эпир ăна тумлантаратпăр. Шкула çӳреме, унта улăштарса тăхăнма тата физкультура урокĕсене кĕме уйрăм пушмаксем тата кроссовки кирлĕ. Сутуçăсем каланă тăрăх, çаксене туянма пурĕ 1500 тенкĕ таранах тухса каять. Ку юрĕ-ха. Шурă кĕпе-блузка шыратпăр. Чи йӳнни 250 тенкĕ тăрать. Спорт костюмĕ тата шкула кашни кун каймалли костюмсен хакĕсем те самаях йĕплĕ – 450 тенкĕрен тата 1000 тенкĕрен пуçласа. Хĕрачасене тата шурă колготки, бантиксем кирлĕ. Сахалтан та вĕсемшĕн 170 тенкĕ пама тивет. Шутлатпăр та, алăсене шарт! çапатпăр – 3300-3400 тенкĕ.

Малтанхи тепĕр пин тенкĕне хушатпăр. Унталла-кунталла 100 тенкĕ – 4 пин çурă пулчĕ те. Эпир улăштарса тăхăнмалли çи-пуçа та, ытти вак-тĕвеке те шута илмерĕмĕр-ха. Апла пулсан ку – «чи йӳнĕ» шкул ачин «хакĕ» пулчĕ. Енчен те шкула каяканнисем çемьере татах та пур пулсан...

Пасарта вара шкула каяс умĕн хаксем татах хăпарасси – яланхи пулăм. Ачасемшĕн çавах укçа кăларса хураççĕ теççĕ сутуçăсем, уйрăмах хуларан килеккеннисем, хаксене чакарас темеççĕ. Ашшĕ-амăшĕ, паллах, ниçта та кайса кĕреймест – туянать.

**Хаксемпе Н. НИКОЛАЕВА паллашнă.**

**Спорт**

# Уява паллă турăмăр



Иртнĕ шăмат кун Физкультурниксен кунне уявларăмăр. Çак куна халалласа ĕнтĕ августăн 7-мĕшĕнче «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕнче спорт уявне паллă турĕç.

Район шайĕнче иртнĕ уява пуçтарăннисене район пуçлăхĕ Ю. Иванов саламларĕ. Çирĕп сывлăхпа çĕнĕ çитĕнӳсем суннă май вара спорта аталантарас ĕçре тăрăшакансене Хисеп грамотисем тата Тав çырăвĕсем пачĕ. Вĕсен хушшинче Юнкă шкулĕн физкультура учителĕ В. Крылов, районти вĕрентӳ пайĕн ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн тренер-преподавателĕсем М. Овчинникова (çăмăл атлетика енĕпе) тата О. Сютруков (бокспа). Спорт темине анлă çутатса тăнăшăн информаципе тивĕçтерекен пай специалистне Н. Павловăна, район тата республика шайĕнчи спорт ăмăртăвĕсене активлă хутшăннăшăн финанс пайĕн специалист-экспертне Д. Капустина та чысларĕç. «Оринино» хуçалăхри Атапай участокĕн ертӳçине А. Прокопьева, Çатракасси шкулĕн физкультура учительне Р. Григорьева «Единая Россия» партин регионаллă уйрăмĕн секретарĕ ячĕпе Юрий Александрович грамотăсемпе пĕрлех парнесем парса саламларĕ.

Пуçланчĕ вара уяв. Ăмăрту программипе командăсем малтанах паллашнăччĕ ĕнтĕ. Пурте хатĕр. Чи малтан роликлă конькисемпе чупакансем старта тухрĕç. Хальлĕхе кунашкал чупусем сайрарах иртеççĕ. Çавăнпа та чупăва конкурс шайĕпе ирттермерĕç. Кашни хăйĕншĕн пулчĕ тесен те юрать. Çапах та çĕнтерӳçĕсене палăртмалла. Вĕсем: А. Авдеева, Р. Соловьева, Г. Михайлова; арçынсем хушшинче И. Воробьев, Р. Егоров тата В. Михайлов палăрчĕç.

Çав вăхăтрах шашка-шахмат вăййисем те, сĕтел çи теннисĕ енĕпе те ăмăртусем пычĕç. Шашкăлла выляксенчен 1 вырăна А. Прокопьев («Моргаушская» МСО команди) тухрĕ. Шахмат вăййисенче П. Пушкарев («Моргаушская» МСО команди) пуринчен нумай очко пухма пултарчĕ. Сĕтел çи теннисне выляксем хушшинче В. Павлова (Муркаш райповĕ) çитекенни пулмарĕ.

ФСК уçăлнăранпа бассейнра иртекен ăмăртусем те питĕ интереслĕ иртеççĕ. Çак уявра та ишекенсем хаваспах ăмăртрĕç. Хутăш эстафетăра кил хуçисем мала тухрĕç. Ку çапла пулмалла та ĕнтĕ. Вĕсем хыççăн – Муркаш райповĕн тата Мăн Сĕнтĕр райповĕн командисем.

Урамра вара командăсем баскетбол вăййинче вăй виçрĕç. Сулхăнрах та çиллĕрех çанталăкра самаях ăшăнчĕç выляксем. Çĕнтерӳçĕ ятне вара каллех «Сывлăх» ФСК команди çĕнсе илчĕ. Призлă вырăнсенче – Мăн Сĕнтĕр райповĕн тата «ИП Васильев» командисем.

«Хаваслă стартсем» чăннипех те хаваслă пулчĕç. Тĕрлĕ заданисене пурнăçласа каллех кил хуçисем мала тухрĕç. Мăн Сĕнтĕрпе Муркаш райповĕсен командисем финиша иккĕмĕшпе виççĕмĕш çитрĕç.

Уяв программинчи ăмăртусене пĕтĕмлетнĕ май вара «Сывлăхсем» иккĕмĕш вырăна, Муркаш райповĕн команди виççĕмĕш вырăна тухрĕç. Çĕнтерӳçĕ – «Моргаушская» МСО.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

## «Ильичасем» çĕнтерчĕç

Августăн 8-мĕшĕнче Ярапайкассинчи вăтам шкулти стадиона футбол вăййине кăмăллакансем пухăнчĕç. Çак кун Физкультурниксен кунне халалланă футбол Суперкубокĕ иртрĕ. Стадионта Мăн Сĕнтĕрĕн тата Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхăн командисем вăй виçрĕç.

Хĕрӳ кĕрешӳре 3:2 шутпа Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăх команди çĕнтерчĕ. Диплом тата парне – така – парса чысларĕç вĕсене. Мăн Сĕнтĕрсем те финалист ятне илсе диплома тивĕçрĕç.

## Муркаш çамрăкĕсем – кĕмĕл призерсем

Августăн 1-6-мĕшĕсенче Саранск хулинче çуллахи биатлонпа Раççей ăмăртăвĕсем иртнĕ. Пурĕ унта 12 регион спортсменĕсем хутшăннă. Чăваш Республикин пĕрлештернĕ командинче пирĕн районти çамрăк спортсменсем те пулнă. Вĕсем иккĕшĕ те – Павел Охотников (тренерĕ А.К. Савельев) тата Анастасия Костина (тренерĕ Э.А. Гордеев) ăмăртăвăн кĕмĕл призерĕсем пулса тавраннă.

**МУП «Управляющая компания ЖКХ» Моргаушского района объявляет**

**МУП «Управляющая компания ЖКХ» Моргаушского района объявляет комиссионный отбор предприятий и организаций по капитальному ремонту многоквартирного дома на 2009 год:**

| Место выполнения работ (адрес многоквартирного дома) | Объем работ (площадь объекта, кв.м.) | Краткое описание работ | Стоимость работ, руб. | Сроки выполнения работ |
|---|---|---|---|---|
| д. №34 по ул.Новая в с.Б.Сундырь | 1050 | Ремонт крыши | 1003390 | После заключения договора в течение одного месяца |

**Документы для участия в комиссионном отборе принимаются в запечатанном конверте не позднее 10.00 час. 01.09.2009 г. Дата вскрытия конвертов: 13.30 час. 01 сентября 2009 года. Подведение итогов комиссионного отбора в 10.00 час. 04 сентября 2009 года.**

**Обращаться в комиссию по адресу: с.Моргауши, ул.Мира, д.6. Тел.63-4-30, 62-2-43.**

**Подробная информация на сайте http://gov.cap.ru/main.asp?govid=71.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления


**В ООО «Заря» требуются повар и бухгалтер с опытом работы. Тел.: 8-903-066-20-73.**

Участница долевой собственности **Данилова Наталия Даниловна, 03.09.1921 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, д. В. Олгаши, ул. Центральная, д. 27**, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Большесундырское, на территории землепользования **СХПК «Сундырский»**, участок расположен в северо-восточной части кадастрового квартала 21:17:061901 площадью 1,31 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:

1. Администрации Большесундырского сельского поселения.

2. Даниловой Наталии Даниловне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, д. В. Олгаши, ул. Центральная, д. 27.

Участница долевой собственности **Альмешкина Валентина Леонтьевна, 19.02.1931 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, д. Вомбакасы, ул. Хырлыхская, д. 81**, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Большесундырское, на территории землепользования **СХПК «Сундырский»**, участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:061901 площадью 26,2 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.

Все возражения по месту расположения земельного участка прошу направлять по адресу доверенного лица: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Афанасьева, д. 12, кв. 77 Федоровой Светлане Владиславовне ценным письмом с вложением.

**Продаю аппарат машинного доения. Тел.: 8-905-347-58-15.**

**Продаю двухкомнатную квартиру в д. Москакасы. Тел.: 8-902-661-23-17.**

**Требуются рабочие на уборку картофеля в Спасский район Нижегородской области. Тел.: 8-902-687-01-77.**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 4-5.**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:120801:76, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д. Ермаково, ул. Мешакова, д. 20, для строительства и эксплуатации зданий и сооружений, площадью 2577 кв. м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**




**Вниманию руководителей ООО!**

**Всем ООО, зарегистрированным до 01 июля 2009г., необходимо пройти перерегистрацию – привести учредительные документы в соответствие с Федеральным законом №312 от 30.12.2008г.**

**Срок перерегистрации - до 01 января 2010г.**

**ООО «Виктория»**

**Адрес: ЧР, с. Моргауши, ул. Мира, д.6, офис 119 (здание администрации района);**

**г. Чебоксары, ул.Т.Кривова, д.4а.**

**Тел.: (83541)62-4-43; (8352)22-10-60.**

**Моб.: 446-448. 2-5.**

**УВАЖАЕМЫЕ ПОДПИСЧИКИ!**

**С 1 июля по 31 августа идет досрочная подписка на 1 полугодие 2010 года. Спешите подписаться на ваши любимые издания по ценам 2 полугодия 2009 года. Ждем вас в отделениях связи.**

**2-2. Моргаушский почтамт.**

**Блоки керамзитобетонные 20х20х40, бетон, раствор, песок, гравмасса, щебень, асфальт, ЖБИ.**

**Тел.: 8(8352)52-95-95, 8-927-668-84-40. 14-40.**


Коллектив райбольницы № 2 выражает глубокое соболезнование работнице райбольницы Бочкаревой А.Н. по поводу кончины

**МУЖА.**


**Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»**

УЧРЕДИТЕЛИ:

Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.

РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» Минкультуры Чувашии.

**Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.**

**АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9А.**
**ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 62-1-36, заместитель главного редактора - 62-2-82, бухгалтерия - 62-1-35, отделы: общественно-политической жизни - 62-2-82, экономики - 62-1-38.**
**Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru**

**Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.**
**Свидетельство о регистрации ПИ № ТУ 21-00025 от 26 декабря 2008 года.**

**Объем 1 усл. печатный лист.**

**Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.**

**Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.**

**ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.**
**Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.**
**Дежурный по номеру Белов А.П.**
**Номер подписан 11.08.2009 г.**
**Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.**
**Заказ Тираж 3770.**

Номер набран и сверстан в РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.